30-272

ХУСАНКАЙ

# ХУРИ ★ ҪИРӖМ УЛТТӐ

ТӖПИСТАТ — МУСКАВ
1930

КП

# ХУРИ.

*Ҫӑваш ступентҫӗсене.*

I.

Пӗлместӗни ес,
Ҫӑваш:
Мӗншӗр ҫак кӗтес
Йӑваш?
Мӗншӗн ҫакӑнта
Мӗнпур
Етем тӳсейми
Хӗнхур?
Ӗҫлетӗр вӗт пит
Матур.
Ӗҫлетӗр ӗмӗр
Ӗмӗр,
Ҫапах саплӑк ҫеҫ
Йӗмӗр,
Ҫапах ҫӑпата
Ура,
Пурнан пӳртӗрсем
Хура.
Йе ку хӑвӑра
Кура?..
Ҫӑваш ӗнсине
Хыҫаӑ,
Пӑхаӑ мал йенне,
Хыҫа.
Ытти те ҫаплах
Хресҫен,
Такамшӑн вӑл та
Ӗҫҫен

Мӗскер тӑвӑнха
Пӗђђен?
Йӗрет, хурланат̆
Кӗсле,
Шырат̆ урӑхла
Меслет.
Анђах ун сасси
Ҫинҫе,
Йалтан тухасси
Инҫе,
Ларах кӑмаку
Ҫинђе.
Кавлет хӗвеле
Вӑпӑр,
Ђӳке хатӗрле
Вӑкӑр.
Куҫа тӗтӗрет
Кӑмпа.
Сӑра ӗҫтерет
Ђӑмпа,
Киђем тӗк—вӗрет
Хӑмпа.

II.

Ҫулсем шӑвӑнаҫ
Пӗр май,
Лӑпланђӗ шӑпӑр,
Сӑрнай.
Шӑппӑн тӗлӗрен
Йала
Кӗрет тӗрлӗрен
Йӑла.
Ҫуралђӗ кӗрен
Йалав.
Манман пуљха ес
Ӑна—
Пӗр ҫирӗм ик ҫул
Кӑна,
Епир ҫуралман
Ђухне,
Раҫҫей ӗҫҫыннин
Йунне
Тӑктарнӑ вӗт пит
Йӳне.

Ҫӑваш ҫӗршывне
Унҫух
Хускатнӑ ҫӗнӗ
Уҫук.
Хастар Тимухха—
Хури
Йалти халӑха
Йури
Вӗрентнӗ пӑлхав
Йурри.
Ӑна ес пӗлен
Аван,
Вӑл ирӗкпелен
Тӑван.
Ӑна астӑваҭ
Ҫӗмпӗр...
Кайран хытӑрах
Ҫӗлпӗр,
Вара ӗмӗрлӗх
Ҫӗпӗр.
Мухтавлӑ вӑрман
Тайка,
Анҫах ес кунтан
Кайха,
Ҫуратнӑ Кӑшка...
Ҫынсем...
Ӑҫтан кӑмӑлпа
Тӳсен,
Ӑҫтан ҫӑттӑрха
Студент.

III.

Ҫӗпӗр! Йумахри
Ҫӗршыв.
Паха ун мӑйрин
Шӑрши.
Анҫах аллунта
Ҫӑра,
Хуралҫӑ утаҭ
Хыҫра—
Мӑйӑр таттармасҭ,
Ҫараҭ.
Пӑшаллӑ салтак

Хăнђăр,
Анђах урунта
Сăнђăр.
Сăнђăр ђĕркуççи
Таран,
Утатăн аран
Аран,
Ăçтан, унпала
Таран?
Сăнарĕ иккен
Салтак,
Ђасах пилĕкне
Салтаŷ.
Ђăмăр саламат
Ђĕнтен,
Выртах, ан ахлат
Хĕртсен.
Çапла касамат
Тĕнђен...
Лере инçетре
Кăшка,
Урам варринђе
Çăка.
Çанталăк каллех
Уйар,
Çăка йăлăнаŷ.
Каçар...
Ĕçсем курăнаŷ
Нађар.
Ђăваш калаçаŷ
Хуллен,
Кĕтеççĕ хыпар
Куллен.
Хыпар илтĕнмест
Ниçтан,
Хăрушă сăмах
„Ристан“
Усал хурахпа
Пĕр тан.

IV.

Кунçул—ĕмĕре
Çеçке,

Ĕмĕр тĕрмере
Кĕскĕ.
Кам курнă—пĕлет тĕр
Тен:
Хĕвел лекеймен
Çĕрте
Ђерђенкĕ ўсет
Серте.
Хури — сарăлан
Ђеђек,
Сасартăк йулаŤ
Хĕç пек.
Тискер тупăклах
Ăна
Хĕсет тăваткăл
Çтена,
Темтепĕр кĕрет
Тăна.
Ђĕмпĕр... Шупашкар...
Хусан...
„Хресђен пĕр кавар
Пулсан

Тен лармăттăм еп
Кунта,
Анђах хĕрхенеп
Ђунтан
Çав сўннĕ хĕлхем—
Вута!“
Пĕрре кăментант
Кĕрсе
Каларĕ халтан
Хĕрсе:
„Сире пайан кун
Хавас—
Тухатăр кунтан
Ак ђас.
Вăрçа! Раççейе
Çăлас“.
Унђђен те пулмин
Пĕр çын
СапаŤ тĕрмене
Краççын...
Урам йанратаŤ
Хыпар,

Мĕн пур арестант
Ђăл-пар...
—Суйан, кăментант!
Ан тар!

V.

Хĕлле. Шартлама
Февраљ.
Ăна астумап
Еп хаљ.
Тухманђђĕ унђух
Килтен,
Анђах вунă çул
Иртсен
Йурлатпăр Хури
Çинђен.
Хури — мĕлйунтан
Пĕри,
Ђăвашшăн тăван
Хури!
Çĕмĕр сăнђăрна.

Çĕмĕр!
Пуçланђĕ çĕнĕ
Ĕмĕр.
Хури, ес мĕншĕн
Ђĕмсĕр?..
Вуникĕ асаплă
Çул
Ăна пăхăнтарнă
Ђул.
Илтет вăл „тапран“,
„Салат“.
Анђах хăй аран
Калаŭ:
— Ăçтађђĕши ман
Халат?..
Пĕри ак ĕнтет
Ташша,
Ури айĕнђе
Патша.
Ђăн-ђăн Микулай
Сăнне
Вăл тунă кĕле

Тĕпне,
Çурат̆ те каллех
Хĕнет.
Хури тĕлĕнсе
Пăхат̆:
Ăçтан кун пекех
Хăват?..
Мĕне пĕлтерет
Карттин?
Патша кирлĕ мар
Еппин?..
Тинех революци,
Тин.

VI.

Салатрĕ тара
Пăшал,
Улат̆ тайкара
Шаккал.
Хăйра çĕççĕне
Хăйра!

Раççей — сĕтĕрĕнен
Майра—
Ан пултăр текех
Кайра.
Анçах ĕççыннин—
Айух,
Нимен те çĕнни
Хал çук.
Çапат̆ вăл мĕскĕн
Пĕççе;
Керенски çӳрет
Вĕçсе,
Çĕленĕ питне
Кĕççе.
Керенски... çапла,
Çапла...
Вăл тухнă иккен
Çапла.
Хуришĕн ку паллă
Йат,
Хури шухăша
Кайат̆:

Керенски... ҫапла...
Ваккат.
Пайтах... Асилсен—
Тĕлĕк:
Вуникĕ ҫулсем
Ĕлĕк,
Персе вĕлерес
Ђухне,
„Хăйуллă студент“
Хутне
Вăл кӳртнĕ Хусан
Сутне.
Тен хаљ те пĕр пек
Ĕмĕт...
Анђах хĕпхĕрлех
Пĕлĕт.
Ӳсет урăхла
Вăйхал,
Пуҫтарђĕ тара
Пăшал.
Шăпах тайкара
Шаккал.

VII.

Хури тавăрнаӳ
Киле.
Кăшка, ҫыннуна
Пилле!
Ан йутшăн упран,
Ан ђак,
Куран — вăл суран
Авђах.
Хавшаннă, куран,
Тăнђах.
Вуникĕ асаплă
Ҫул—
Ăна пăхăнтарнă
Ђул.
Ĕлĕк вăйпитти
Йĕкĕт—
Пайан вăл хăрăк
Шĕшкĕ;
Шĕшке шĕкĕлђет
Шĕкĕ.

Килйыш палламасӑ.
Кам ку?
Мӗскершӗнха, ма
Салху?..
Кӑкӑр таранах
Сухал,
Кӗтеслӗ йанах
Ун хаљ,
Ниçтан паллама
Çук хал.
— Тимуш... Тимухха?..
Çавах...
Ђухлаççӗ пуљха
Çапах.
Ыйтаççӗ: ӑçтан,
Мӗнтен
Мехелӗ килет
Тӗнђен?
Илетши çӗре
Хресђен?..
Хури шухӑшлаӑ:
— Аха...

Керенски — мӑкла
Така.
Вӑл çакнӑ паха
Ука,
Кунта макӑраӑ
Суха.
Еппин пуçланман
Пуљха...

VIII.

Хире киђемлет
Хӑмӑл,
Салхуçке темле
Кӑмӑл.
Шаланкӑ йӗрет
Çинçен,
Ес çав кӗвӗре
Сисен
Такам ӗмӗрӗ
Çинђен.
Ку камши — васкаӑ

Çулпа,
Мĕнле мăн каска,
Йупа?
Ку кам пăрăнаҫ
Унтан?
—Тăхта!.. Ҫар ăна,
Шуйттан!
Ăçта çăвана
Ҫупан!?
Курмастăним ес,
Улпут,—
Ванаҫ тӳсеймест
Ҫул çурт.
Илтместĕним çак
Сасса:
—Пĕтех, йун ĕçен
Сăпса,
Кăлар ман йуна
Хăсса!..
Октапĕр! Çунаҫ
Çĕршыв.
Мĕншĕн еп çунат-
сăрши?
Октапĕр! Ҫасрах
Вăран,
Етем тивĕçне
Тăман
Асаплă ҫăваш—
Тăван!
Илтсемҫҫĕ, мĕскĕн,
Илтсем:
Çăтмак — çĕнĕ тĕн
Çĕнсен!
Пăхсамҫҫĕ вĕçрен
Вĕçе—
Хĕрессĕр етем
Миçе?
Хĕçе ес ĕнен,
Хĕçе!

IX.

Ан ҫарăн, йетре,
Йурла.

Кӑвак пӗлӗтре
Ҫурла.
Ан ҫывӑр, ҫӗнӗ
Хурал,
Октӑпӗр ҫӗнет—
Хускал,
Тӗлле тӗнҫене.
Путвал!
Кӗр-рӗс! — ишӗлет
Пашне.
Тустар, ан шелле
Ӑшне.
Ҫак ылттӑн калпак—
Пире,
Вӑл пирӗн халпа
Хитре,
Шӑратӑр унтан
Йетре!
Ҫак тутлӑ ерех—
Ман йун,
Еп пурӗпӗрех
— Мӗлйун...

Ҫипер ҫарамас
Хӗртен
Ҫаратар алмас,
Мерҫен.
Вӑл пирӗн хавас,
Пиртен!.
Мӗлйунлӑ сасса
Пӗр сас
Аҫтан каласа
Парас?
Анҫах мӗлйунтан
Пӗри—
Ҫӑвашшӑн тӑван
Хури—
Пулса мӗн накан
Хурри.
Ҫак пысӑк хуйха
Пӗлме
Сӗмленҫӗ ҫӑка,
Йӗлме.
Калан никамах та
Ҫук,

Çил çеç такама
Хăш ђух
Ђӳклет тем амак
Уђук.

X.

Çулсем шăвăнаç
Пĕр май,
Каллех вăранаť
Сăрнай.
Каллех теремет
Тухйа
Тухса илемлет
Туйа.
Сӳнмест мĕн ĕмĕт,
Туйан.
Кунçул — ĕмĕре
Çеçке,
Ĕмĕр тĕрмере
Кĕске.
Анђах асăрха,
Сăна:
Екран çийĕнђи
Çынна,
Палларĕ мĕнпур
Хăна.
Çăтаймĕ еппин
Çава,
Куран — миçе пин
Ђăваш
Унпа пĕр кавар
Çак кун:
— Пайан Шупашкар
Ман ђун,
Йулташ, алă пар,
Ырсун...
Çитмен ĕмĕтсем
Çитсен
Аваллăх тĕксĕм
Иккен.
Анђах вăл асапсăр
Мар,
Кĕлленнĕ пайтах

Кăвар.
Ăна та пуçа
Тайар.
Çухалнă йата
Тупсан
Ђуну хĕпĕртет
Пуљ сан.

Анђах йатсăрри
Миçен,
Çĕклентĕр тăпри
Вĕсен!
Çак йурă Хури
Çинђен...

# ÇИРĔМ УЛТТĂ.

*Елкере.*

Çирĕм улттăн вĕсем,
Çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă çулпуç—
Сахал мар.
Вĕсен йаҫĕ пуриншĕн те ылттăн,
Çирĕм улттăн вĕсем,
Çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă ҫăн-ҫăн комунар.
Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ
Тамăкри пек вунсаккăрмĕш çул.
Кам пытарĕ пайан
Кам тунĕ?
Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ
Çирĕм ултă маттур—
Пулҫĕç çук.

Каçпи тинĕс ђăнах та йĕрет-çке,
Каçпала ес итлеха,
Сăна:
Шаумен...
Аçиспек...
Ђшаппаритçе...*)
Каçпи тинĕс ђăнах та йĕрет-çке—
Çирĕм ултă йата асăнаў.

---

Красновотск—
Ђăвашла Хĕрлĕ шыв вăл,
Хĕрлĕ шывăн тĕрми пĕђĕк мар.
Шаумен калаçаў:
— Савнă ывăл!
Çакăнта ак хупаç пăђăхма.
Мĕншĕнне ăнланмашкăн ес çамрăк,
Камшăнне те ђухлаймăн-ха хаљ.

*) 26 комиссартан ђи паллисем. Шаумене унти пролеттариат „Капкас Ленинĕ“ тесе хисепленĕ.

Кӑлӑхах сан пуҫна епӗ ҫаврӑп
Пысӑк шухӑш кӳртсе,
Так ахаљ.
Ҫавӑнпа
Ытлашши сӑмахсемсӗр
Уйрӑлмашкӑн тивет аҫуна.
Самана пит хӑрушӑ та сӗмсӗр,
Ҫав вутра
Ман асаплӑх ҫунаť.
Ман ҫеҫ мар,
Тӗнђери пур ӗҫхалӑх
Пайан кун ҫӑлӑнӑҫ тилмӗрет.
Малашне тек асаймӗ ђуралӑх,
Йулашки хут тӗрмере ларап.
Ҫирӗм пилӗк Пакку комиссарӗ,
Ҫирӗм улттӑмӑш еп хупӑнап.
Каҫарми ултавпа улталарӗ
Ирсӗр Фунттиккӑв...
Паллӑн ӑна.
Сывӑ пул!
Анђах курӑпӑр халӗ,
Ан куљанӑр,

Ан хуҫăлăрсам.
Ыранхи телекрам мĕскер калĕ
Илиҙҙен ырă сывă ларсан...

. . . . . . . . . . . . .

Ашшĕ урăх сăмах каламарĕ
Хурал хушрĕ ҙасрах пĕтерме.
— Сывă пултăр Капкас истеррори!!!*)

Тесе йаҙĕ пĕр харăс тĕрме.
Шаумен ҫĕлĕкне хывса илҙĕ,
Куҫĕсем йăлкăшаҫҫĕ ҫиҫĕм пек.
Итлĕр ав—
Калаҫаĭ Ҙшаппаритҫе:
Итлĕр ав калаҫаĭ Аҫиспек.
... Паккура пĕтĕм пурăнăҫ нехтă,
Ҫынсенҙен сăрханаĭ масут.
Акăҙҙан йыттисем иртĕннех тĕк—
Ĕҫҫынни,
Хăвна ху ан сут!
Апшерон утравин хура йунĕ
Вĕсене халĕ канăҫ памасĭ.

---

*) Истеррори — револютсионер.

Ҫав мула вӗҫертсен
Мӗскер йулӗ
Ишӗлен хуралта йусама?
    Ишӗлет вӗт,
    Куллен ишӗлет-ҫке,
    Хӑварма йурамаст̆ ырана.
    Тен вӗсем аслӑ ҫулга кӗтеҫҫӗ
    Интийе, Тӗрӗке, Ирана *).
Туркестан хирӗнӡен шурӑ мамӑк
Пӗр пекех вӗсене илӗртет.
Ӗҫҫынни!
Ес кала:
„Памӑп, памӑп!
Ҫирӗм улттӑн ҫеҫ мар епир?“ те

*
* *

    Вӑл каҫ тинӗс тискерӗн хумханнӑ,
    Инкекпе ахӑр йулнӑ пӗр ӡун.
    Тӑшмансем ҫӗрӗпех каварланнӑ—

---

*) Иран — Перҫи.

Ретшинаҫт,
Пиҫҫерехҳӑв та Кун*)
Ретшинаҫт.
Акӑҫҫан кӑпиттанӗ,
Асхапатшӑн хӑрушӑ хӑна.
Интийе пӑхӑнтарнӑ Приттани
Мӗн ҫитменшӗн тата ӑвӑнаӗ?..
— Ан ҫиленӗр мана, мистӗр Трушкӗн**)
Анҫах еп шухӑшлап ӑрасна.
Ҫирӗм ултта—
Вӑл тупӑшлӑ ушкӑн,
Ӑна нимӗнсӗрех йарас мар.
Пирӗн миҫҫи...
Пӗлетӗр вӗт есир:
Турккестан...
Малашне тен Капкас...
Ҫавӑнпа,

*) Кун — Хӗрлӗшывра акӑҫҫансемшӗн Фунттиккӑв роҫне выҫанӑскер.

**) Трушкӗн — Асхапатри шырав пӳровӗн пуҫлӑхӗ.

Вăхăта ирттермесĕр,
Мешшете вĕсене ăсатас.
Мешшетри акăлџан вăрттăн çарĕ,
Кирлине лайăхрах тĕпџесен—
Çăмăлах Интийе те куçарĕ,
А унта—
Вара пирĕн вĕсем...
— Ăнланатăп сире, кăппиттанăм,
Ăнланатăп аван, мистĕр Тшонс.
Ун çинџен еп тахçан шухăшланă,
Анџах хаљ
Ман пĕртен пĕрех шанс!
Сирĕн шухăшăр тӳрĕ пулсассăн,
Сăмах питлĕхтĕн çеç пулмасан—
Ак халех
Телефон тăрăх сассăм
Пиџџераххăв патне çитĕ ман.
Вăл кунта
Пиçсе çитнĕ тиктаттăр,
Сирĕнпе килĕштерĕ пуљ теп.
Мансăрах ĕнтĕ есир џухлаттăр:
Унăн йаџĕ питрех те çӳлте...

Ретшинаҫт кулса ҫеҫ алă паҫĕ,
Куллинҫе те шăлне вăл хăйраť.
Пиҫҫераххăвăн ҫаплă-тăк йаҫĕ—
Ун мĕскершĕн вара пит кайра?
Тахҫанах вăл ăна илнĕ сутăн,
Пиҫҫераххăв тахҫан унпала.
Шырав пуҫлăхĕ ҫеҫ
Пулнă кутăн,
Хаҫ, ăна та вăл ак
Улталаť.
Ҫирĕм ултă—
Вĕт тупăшлă ушкăн,
Пĕр лексен ҫĕрĕллех йарас мар.
Ан ҫиленĕр ăна, мистер Трушкĕн,
Анҫах шухăшĕ ун...
Ăрасна.

*
* *

Хĕрлĕшыв тĕлĕрмест пĕр минут та,
Пĕр минут куҫ хупман кĕҫĕр Кун.
Ун пуҫне ҫавăраť Ҫирĕм Ултă,
Ҫирем Ултă ҫинҫе шухăш ун.

— Йе ҫӑнах ҫаксене майласассӑн?
Вӗт мӗн пур Капкасри пурлӑха
Ҫак антра сурӑх пек
Хура масса
Пуҫҫапса кӳрӗ ман халӑха.
Вырӑс, вырӑс—
Тӗнҫе кӗлӗмҫи!
Пӑлханах, пӑлханах,
Тен пултарӑн.
Анҫах саншӑн хаљ нехтӑ, пенҫин
Паккура калама та ҫук тарӑн.
Унта пирӗн йалав вӗлкӗшет,
Фонттансем пире майӑн шавлаҫҫӗ.
Ак тата аппаланӑр пӑртакҫӗ,
Ҫур Раҫҫейӗр те
Касӑлӗ шет.
Хӗрхеҥетӗп сире.
Пулӗ йывӑр
Комунисӑм тӑван мӗскӗнсем..
Акӑљҫан! Акӑљҫан!
Ан ҫывӑр,
Ӗмӗр ҫаплӑ йатна ан ҫӗртсем!

. . . . . . . . . . . . . . .

Асхапат —Хĕрлĕшыв — Асхапат—
Шак та шак тутараҭ телекраф.
— Мĕн тăвас?
Тесе Кун аптрăтаҭ,
— Вĕлерес!
Тет лерен Пиҫҫерахҳăв.

Ретшинаҫт ухă пек йарăнаҭ.
Кĕçĕрех,
Çывăрмасăр васкас.
Капкаса,
Капкаса пар ăна,
Асĕнҫен кайас çук ун Капкас.

Хĕрĕх тăххăрмĕш нумĕр правус,
Ик вакун туркменпа вырăс çарĕ.
— Ахвитсер!
Пуçуна пит ан ус!
Тесе çеç кăппитан кĕрсе кайрĕ.

Пĕр никам та пĕлмест халĕ—
Темшĕн
Кирлĕ пулнă кун ҫухлĕ салтак.

Ретшинађт куппере пĕђђенех мĕн
Çирĕм Ултташăн пусă алтаŤ.

Вакунсем алланса пынă майĕн
Вăл пушшех хĕпĕртет хăй ђунне:
— Шаумен!
Мана тин ес пуç тайăн
Çак хĕçе хам çĕкленĕ ђухне...

Çухрăмсем вĕлтетеççĕ хисепсĕр.
Кăвакарђĕ кĕрхи тĕттĕм каç.
Ах, сисетпĕр, сисетпĕр, сисетпĕр!
Т~~инех~~ пралуксем йантăраç.

Акăђђан кантăкран пăхса пыђĕ—
Çесен хир.
Саксаул та хăйăр.
Куçĕсем етем йунĕшĕн выçă,
Вăр-хурах пек çиллес те хайар.

* * *

— Тĕрме алăкĕ ма йывăç мар-ши,
Ма çӳлте-ши ун кантăкĕсем?..

Пуçласам пĕрех хут „Сейттун Маршĕ“ *)
Хам çуралнă çĕре еп вĕçем.

Унта ватă аннеçĕм ман йулђĕ,
Аннепе аса килђĕ Арас **)
Çав Арас хĕрринђе пирĕн çуртђĕ,
Еп йалан шухăшлаттăм—
Тарас...

Вунтăвата çултах килтен тухрăм,
Анђах ман халăхăн сум çукран—
Вунă пин,
Йе вунпилĕк пин çухрăм
Çул çӳренĕ пуђ епĕ çуран.

Савăтан кĕрен
Хапрăкан—
Тăрăхлаççĕ, кулаççĕ кăна.
Ман пулассăм килместђĕ çын айĕ,
Пулмассăн сăнђăр тăхăнан.

---

*) Сейттун маршĕ — ерменсен хăйсен халăхшăн вăрçнă ђух йурлакан револђутсиллĕ йурри.

**) Арас — шыв йађĕ.

Пољшшевик!
Еп пӗлеп: вăл ђапа
Кăларасшăн ҫунмасӑ хăй ҫӗрне.
Хӗвелтухăҫ ҫыннийӗ ҫапах
Иртнине манас ҫук ӗмӗрне.

Пољшшевик!
Ун тăван ҫӗр-шывӗ
Кунта мар,
Лере мар
Тӗнђипех.
Хӗвелтухăҫ ҫынни те хаљ тăвӗ
Йурриие хăй тăван ђӗлхипе.

Пуҫласам пӗрех хут „Сейттун Маршӗ“—
Хам ҫуралнă ҫӗре еп вӗҫем...
Тӗрме алăкӗ ма йывăҫ мар-ши.
Ма ҫӳлте-ши
Ун кантăкӗсем?..

. . . . . . . . . . . . . .

Ак пӗри ҫывхарђӗ вăрахăн,
Такама ӳкӗтлет хăй пухма:
— Ăнлансан шикленмешкӗн пăрахăн.

Ăнланмастăн пулсан—
Ес ухмах...
Паккури пролеттари хаҫ пирĕн.
Ҫирĕм Ултта—
Вăл пысăк ҫăрмав.
Ҫавăнпа
Ес вĕсемшĕн ан хирĕн
Еп кунта вĕт килмен каҫарма.
Тата ҫур сехетрен епĕ пулăп,
Ес унҫҫен те ĕҫе татмасан—
Ҫак ука шĕрепелĕ хĕҫпулă
Пит те тутлă апаг вара ман!..
Хурал шалт туса ҫеҫ хисеп паҫĕ:
Манран ним те килмест, хоспотин.
Ретшинаҫт кăппиттан ырă йаҫĕ
Ăшăмран тухас ҫук пайан тин...
— Ку аван, ку аван.
Ҫапла кирлĕ,
Пăхăнас пулаť аслă ҫина.
Сире пит хĕстереҫҫĕ мĕн вирлĕ,
Анҫах кур—
Епĕ вăл Ретшинаҫт!

Вăрăммăн кĕмсĕртетрĕ çăра,
Ђĕрисем сиксе иђђĕс пурин те.
Çирĕм ултă кăмиссара
Мĕне кирлĕ хађ Перççи йе Инти?

Хађ кунта вĕт кунта пĕтермен,
Капкасра тумаллађђĕ тăванлăх.
Хăй̆ круçин,
Хай̆ ђерккес,
Хăй̆ ермен—
Кашни ырлăх кĕтет, кашни халăх.

Анђах ак Çирĕм Улттăшĕ те
Пĕр етем мелкине тĕл пулаççĕ.
Хатĕрленĕр
Халех Мешщете!
Тесе хуђĕ салхулă хуралçă...

* * *

Машшинис Шђекођуттĕн!
Итле:
Перевал йе Ахђа-Куйма*)...

---

*) 26 кăмиссара çав икĕ стантса хушшинђе, Хĕрлĕ шывран 207 çухрăмра, вĕлернĕ.

Ĕҫĕ пулĕ веҫех камитле,
Унпала ес пултарăн пуйма.

Санран епир нумай ыйтас ҫук,
Анҫах ху тек ҫӳремĕн ҫарран.
Еп кăтартнă ҫĕре ҫитес ҫух
Правуса шăхăртан та ҫаран,

Вăл тĕлте расйес мар,
Стантсă мар,—
Саксаул тĕмĕсем те хăйăр.
Ăнланатăн пуҫ теп?

Ман сăмах
Ҫăмăлах катмалли вĕт мăйăр...
Машшинис Шҫекоҫуттĕн итлет,
Май килсессĕн хавал вăл пуйма.
Ĕҫĕ пулĕ веҫех камитле—
Перевал йе Ахҫа-Куйма...

Саксаул тĕмĕсем...
Ҫеҫен хир...
Ретшинаҫт алă сулҫĕ:
— Ҫар!
Шурăм пуҫ хăпарать...

Ђеђен ир...
Ни расйес ку, ни стантсă та мар.
Кĕпĕрленђĕ те тухрĕ салтак.
Тĕрĕслеççĕ пăшалĕсене.
— Ахвитсер!
Есир пулăр малта,
Хаљ пĕр вуннăшне çеç еп ђĕнеп...
Вакуна витĕрех ку тирет,
Кĕрĕслетрĕ ак салп тулта.
— Йулташсем!
Улталарĕç пире!..
Йулташсем!..
Ултав!! Ултав!!!
— Йурĕ, Йурĕ!..
Хаљ тин пуç ан ус...
Фиолеттăв, Меттаксă, Перк..
— Еп лăпках,—
Тет пĕр çамрăк матрус—
Сывă пултăр Комуна!
Пер!..

. . . . . . . . . .

Икçĕр çиҫҫĕмĕш йунлă çухрăм,
Йунпалан хĕрелен Хĕрлĕшыв!..
Таса йун, ес пĕр айăпсăр йухрăн,
Икçĕр çиҫҫĕмĕш йунлă çухрăм,
Вăл пайан та çаплах хĕрлĕ-ши?

Йе вĕсен шăпийех çапла пулнă?
Тавăрмашкăн мĕскер парас-ха?
Каçпи тинĕс пайан та ав хумлă,
Тен вĕсен шăпийех çапла пулнă,—
Кашни çыннăн хăйне ăраскал.

Саксаул тĕмĕсем ҫĕрĕ йунлă,
Ăна курĕç пайтах мĕлйун.
Çирĕм улттăн çеç мар епир йулнă,
Саксаул тĕмĕсем ҫĕрĕ йунлă,
Хăйăра сăрхăнаймĕ вăл йун.

Ав самум та çаплах йĕрсе илҫĕ.
Тинкĕрсе ес итле-ха,
Сăна:
Шаумен
Аçиспек
Ҫшаппаритçе...

Ах самум çаплах йёрсе илӡё—
Çирём Ултă йата асăнаӳ.
    Çирём улттăн вёсем,
    Çирём улттăн,
    Çирём ултă парне—
    Сахал мар.
    Вёсен йаӡё пуришён те ылттăн,
Çирём ултăн вёсем,
Çирём улттăн,
    Çирём ултă ӡăн-ӡăн комунар.

Главлит А—58.117. Заказ 1942 Тираж 3.000 экз.

Кн. ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва,
Шлюзовая наб., д. 10.

Хакĕ 15 пус

Цена 15 коп.

Х.

На чувашском языке

ХУСАНКАЙ. — Сборник стихов.

ЦЕНТРИЗДАТ НАРОДОВ СССР
Москва, центр, Никольская, 10.